24-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1942 ЯНВАРЬ 11 ВЫРСАРНИКУН 9(6034) №

# ЧӐВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

## Вӑрман хатӗрлес ӗҫре механизмсемпе туллин усӑ курмалла

Вӑрман хатӗрлес ӗҫре тӳлевлӗ повинность пуҫланнӑранпа пӗр уйӑх иртрӗ. Ҫак вӑхӑтра чылай районсенчи ялсоветсем вӑрман хатӗрлес ӗҫе активлӑн хутшӑнчӗҫ. Октябрьски районри Хуракасси ялсовечӗ, Ҫӗрпӳ районӗнчи Лӗпсер, Вӗрмер, Етӗрне районӗнчи Кӑташ, Етӗрне ялсовечӗсем вӑрман хатӗрлес ӗҫе ҫиеӗнчех тытӑннӑ. Анчах чылай ялсоветсем вӑрман хатӗрлеме ку тарана ҫитсе пӗр ҫын та яман-ха. Вӑрманта ӗҫлеме тытӑннӑ ҫынсем хушшинче чылай ҫӗрте ҫирӗп дисциплина туса хурайман, ӗҫ кунӗпе туллин усӑ курмаҫҫӗ. Районсенчи руководительсем тата ялсоветсемпе колхозсен председателӗсем нумайӗшӗ партипе правительство панӑ задание вӑхӑтра пурнӑҫа кӗртсе пырас тӗлӗшпе тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнмаҫҫӗ. Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Турханкасси ялсоветӗнчен январӗн 2-мӗшӗнче вӑрманта 7 ҫын ӗҫленӗ, ҫак хисеп ку таранччен нимӗн чухлӗ те ӳсмен. Шоршӑл, Упакасси ялсовечӗсем вӑрман хатӗрлев ӗҫне пачах та хутшӑнман-ха. Ҫавӑн пекех ытти районсенче те нумай ялсоветсем вӑрман хатӗрлев ӗҫне сӳрӗккӗн хутшӑнаҫҫӗ.

Вӑрман хатӗрлес ӗҫре пӗрремӗш квартал пӗтӗм ҫулталӑкри ӗҫӗн ӑнӑҫлӑхне татса парать. Ҫакна шута илсе, пӗрремӗш кварталта вӑрман хатӗрлевӗнче пӗтӗм вӑйпа ӗҫлеме, заданине пӗтӗмпех пурнӑҫлассишӗн тӑрӑшма кирли ҫинчен районсенчи руководительсен колхозниксемпе единоличниксене тӗплӗн ӑнлантарса памалла.

Вӑрман предприятийӗсенчи руководительсен вӑрманта ӗҫлекенсен ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерсе пырассишӗн кӗрешмелле. Кашни мастер участокӗнчех лайӑх организациленӗ бригадӑсем пулмалла. Унта пысӑк квалификациллӗ е сахалтарах опытлӑ рабочисене пӗлсе, тӗрӗс вырнаҫтарса тухмалла.

Ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерессипе инструментсен хуҫалӑхне йӗркелес ӗҫ татӑклӑн сыхӑнса тӑрать. Ҫавӑнпа та вӑрман хуҫалӑхӗнчи инструментсене юсавлӑ тытмалла, кивелнӗ напильниксене тата ытти инструментсене юсаса ӗҫлеме юрӑхлӑ тумалла. Пӑчкӑ, пуртӑ хӑйрамалли пунктсен ӗҫне тивӗҫлипе йӗркелемелле. Вӑрман касакансем яланах лайӑх инструментсемпе ӗҫлеччӗр.

Вӑрман промышленность ӗҫне лайӑхлатма мӗн кирлине пирӗн правительство пӗтӗмпех туса парать. Халӗ пирӗн республикӑри вӑрмансенче механизациленӗ ҫулсем, тракторсем тата ытти сложнӑй механизмсем пур. Ҫавсемпе пуринпе те туллин усӑ курма тӑрӑшмалла.

Енӗшпуҫӗнчи вӑрманпункчӗпе Улатӑрти вӑрманпромхозӗнче каснӑ йывӑҫсене машина ҫине тиес ӗҫе механизациленӗ. Йӗпреҫри тата Улатӑрти вӑрманпромхозӗсенче механизациленӗ пӑчкӑпа анлӑн усӑ кураҫҫӗ. Вӑрман ӗҫӗнчи командирсен пурин те ҫакнашкал механизациленӗ инструментсемпе усӑ курса ӗҫ хӑвӑртлӑхне темиҫе хут ӳстерсе пырассишӗн кӗрешмелле. Анчах вӑрман хатӗрлевӗнче механизмсемпе пур ҫӗрте те ҫителӗклӗ усӑ курмаҫҫӗ-ха. Ҫӗмӗрлери механизациленӗ вӑрманпункчӗн пӑрлӑ ҫул пур. Ҫав ҫулпа турттармалли йывӑҫ та сахал мар, анчах унта ӗҫе лайӑх организацилемен пирки, панӑ задани пурнӑҫланса пымасть.

Ҫавнашкалах Вӑрнар вӑрманпромхозӗ те Ҫарӑклӑри механизациленӗ ҫулпа туллин усӑ курмасть. Декабрь уйӑхӗнче ҫул ҫине юр тултарса кайнипе машинӑсем пилӗк кун хушши ӗҫлемесӗр тӑнӑ. Ку ҫулпа халӗ те ҫителӗклӗ усӑ курмаҫҫӗ-ха. Ҫул начальникӗн Цветков юлташӑн хӑйӗн ӗҫри ответлӑхне яланах асра тытас пулать.

Вӑрнар вӑрманпромхозӗнных Пинерте механизациленӗ ҫул пур. Ҫав ҫул хӗрне вӑрмантан каснӑ йывӑҫсене турттарса кӑларман пирки ку ҫул ҫинче машинӑсем ӗҫлемеҫҫӗ.

Вӑрман хатӗрлев организацийӗсенчи работниксен механизациленӗ ҫулсем патне пур ҫӗрте те чӗртаварсем турттарса кӑларса, вӗсемпе туллин усӑ курассишӗн кӗрешмелле. Инженерсемпе техниксен, кадровӑй рабочисен колхозсенчен пынӑ ҫӗнӗ рабочисене вӑрман ӗҫӗпе паллаштармалла, вӗсене пысӑк тухӑҫлӑхпа ӗҫлеме вӗрентмелле. Коммунистсемпе комсомолецсен хӑйсен активлӑхӗпе пуҫарулӑхне кӑтартса ытти рабочисене хавхалантармалла. Уйрӑмӑнах социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса яни тата двухсотниксен ӗҫне ӳстерсе пыни кирлӗ. Вӑрман ӗҫлекенсем валли техникӑллӑ инструктаж, стахановла шкулсем организацилемелле.

Кашни рабочи вӑрман ӗҫӗн технологи процесне тӗплӗн пӗлни кирлӗ. Кулленхи задание тултарса пырайман пӗр рабочи те ан пултӑр. Стахановецсен кашни пуҫарӑвнех организаципе техника енчен ҫирӗплетсе пымалла. Мӗн-пур машинӑсемпе тата механизмсемпе ҫителӗклӗ усӑ курни, ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетни, технологи процесне пӑхӑнса ӑна лайӑхлатса пыни ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерет.

Кунсӑр пуҫне ӗҫ тухӑҫлӑхне хӑпартса пыма, ӗҫри хастарлӑха ҫӗклеме вӑрманта ӗҫлекенсем хушшинче культурӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе лайӑх йӗркелени, пурнӑҫ условийӗсене куллен лайӑхлатса пыни нумай пулӑшать. Вӑрман ӗҫлеме пынӑ ҫынсем валли ҫителӗклӗ вӗри шыв, пурӑнмалли бараксем пулмалла. Анчах вӑрман хатӗрлекен хӑш-пӗр организацисем ҫак условисене ҫителӗклӗ туса хатӗрлемен-ха. Леспродторг вӑрман ӗҫлекенсем хушшинче суту-илӳ ӗҫне кирлӗ вырӑна лартман. Чылай вӑрман пункчӗсенче столовӑйсен ӗҫне тивӗҫлипе йӗркелемен, вӑрманта ӗҫлекен ҫынсене вӗри шыв парса тӑрас ӗҫе ку тарана ҫитсе те ҫителӗклӗ организацилемен. Вӑрман хатӗрлев ӗҫӗнчи рабочисене пысӑк тухӑҫлӑхпа ӗҫлеме кирлӗ условисем туса парасси—вӑрман промышленноҫӗнчи командирсемпе профсоюз тата суту-илӳ работникӗсен паянхи задачи пулса тӑрать.

Районсенчи тата вӑрман предприятийӗсенчи парторганизацисен бригадӑсенче политикӑллӑ агитаци ӗҫне анлӑн сарса ямалла. Ӗҫ вӑхӑчӗпе туллин усӑ курман, ӗҫре чӑрмантарса пыракан ҫынсем вӑрманта пулмалла мар. Тӳрӗ ӗҫлекен рабочисене пур майсемпе те хавхалантарса, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерсе пыма пулӑшмалла. Ҫапла ӗҫлени кӑна вӑрман хатӗрлев планне ӑнӑҫлӑн тултарма май парать.

## Колхозниксем хӑйсен ытлашши тыррине государствӑна сутаҫҫӗ

КАЛИНИНО. Ҫак кунсенче районри кашни колхозра тенӗ пекех государствӑна кооператив урлӑ тырӑ сутас тӗлӗшпе колхозниксен пухӑвӗсем пулса иртрӗҫ. Ҫав пухусенче пулнӑ колхозниксем хӑйсен Хӗрлӗ Ҫара пулӑшас шухӑш-кӑмӑлӗсене питех те уҫҫӑн кӑтартса параҫҫӗ. Уйкас Юнтапари «Новая жизнь» колхоз членӗ Ульяна Платонова пухура ҫапла тухса каларӗ:

— Аслӑ полководец Сталин юлташ ертсе пынипе паттӑр Хӗрлӗ Ҫар гитлерла ҫӗлен-калтасене ҫапса аркатать. Совет ҫӗршывӗнче ҫав вӑрӑ-хурахла бандитсене валли вилӗмсӗр пуҫне урӑх нимӗн те пулас ҫук. Эпӗ ҫӗршыва пулӑшас кӑмӑлпа Хӗрлӗ Ҫар валли пӗр сурӑх, 2 чӑх самӑртса паратӑп, тата хам ӗҫлесе илнӗ тырӑран 32 килограмм государствӑна сутатӑп,—терӗ.

Колхозниксем государствӑна тырӑ сутма обязательствӑсем илчӗҫ. «Новая жизнь» колхоз членӗсем государствӑна 70 центнер тӗштырӑ сутма йышӑнчӗҫ. Ямбахтинӑри «Партизан» колхоз—82 центнер, Ҫавалкасри «Суттаяла» колхоз—86 центнер, Кушарти Каганович ячӗпе тӑракан колхоз—70 центнер, Хура Пырти «Ким» колхоз—55 центнер сутма йышӑннӑ.

Калинин ячӗпе тӑракан колхозра колхозниксен пухӑвӗ, государствӑна тырӑ сутас ыйтӑва пысӑк хавасӑлӑхпа сӳтсе явса, 150 центнер сутма йышӑнчӗ. Ҫав колхозра уйрӑм колхозниксем хӑйсем ӗҫлесе илнӗ тырӑран пӗрер центнер государствӑна сутаҫҫӗ. Колхозниксем тата единоличниксем сутакан тырра йышӑнса илме Юманай, Алгазино ялповӗсем хатӗрленсе ҫитнӗ.

Колхозсем, колхозниксем тата единоличниксем кооператив урлӑ государствӑна тырӑ сутас ӗҫе парти райкомӗ ертсе пырать. Ялсенче коммунистсемпе партире тӑман большевиксем масса хушшинче агитациллӗ ӗҫе сарса пыраҫҫӗ.

**Е. ВОРОБЬЕВ.**

* * *

СЕНТЕР. Государствӑна кооператив урлӑ тырӑ сутасси пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнине ӑнлантарса панӑ хыҫҫӑн Орининӑри «Красное Сормово» колхоз членӗсем государствӑна кооператив урлӑ 48 центнер тӗштырӑ сутрӗҫ. Колхоз халӗ Оринино ялповӗнчен хӑйне кулленкирлӗ промышленность таварӗсене илет.

**М. ИСАЕВ.**

* * *

ШАХАСАН. Районри ӗҫҫынисем государствӑна кооператив урлӑ тырӑ сутаҫҫӗ. Тӑрӑнти «Красный партизан» колхоз членӗсем государствӑна 15 центнер тырӑ сутма палӑртрӗҫ. Анат Юнтапари Молотов ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем государствӑна кооператив урлӑ 25 центнер, колхозӑн пӗрлешӳллӗ фондӗнчен 15 центнер сутма палӑртнӑ. Уйкас Кипек ялсоветӗнчи Тельман ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем те 45 центнер, колхозӑн пӗрлешӳллӗ фондӗнчен 25 центнер, Куйбышев ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем государствӑна 30 центнер, колхозӑн пӗрлешӳллӗ фондӗнчен 15 центнер тӗштырӑ сутма пулчӗҫ. Тельман ячӗпе тӑракан колхозри колхозниксем В. Иванов—93 килограмм, Ф. Тихонов—51 килограмм, Савельев—32 килограмм тӗштырӑ сутаҫҫӗ.

**В. ЯКОВЛЕВ.**

# Совет Информаци Бюровӗнчен

### Январӗн 9-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Январӗн 9-мӗшӗнче фронтӑн чылай участокӗсенче пирӗн войскӑсем, противник хирӗҫ тӑнине сирсе пырса тата ӑна пысӑк ҫухатусем кӳрсе, малалла куҫса пынӑ, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта, вӑл шутрах **Мосальск, Детчино, Серпейск** хулисене, йышӑнса илнӗ. Нимӗҫ войскисем пысӑк ҫухатусем тӑваҫҫӗ.

Январӗн 8-мӗшӗнче нимӗҫсенне 19 самолет пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн 5 самолет пӗтнӗ.

Баренцово тинӗсӗнче пирӗн карапсем противникӑн транспортне путарнӑ.

* * *

Январӗн 8-мӗшӗнче пирӗн авиаци чаҫӗсем нимӗҫсенне 7 танк, бронемашина, пехотӑпа груз турттарса пыракан 750 ытла автомашина, 38 орудие прислугипе пӗрлех, боеприпассем тиенӗ 475 лава, 3 трактор, зенитнӑй пулеметсен 9 точкине, горючи тултарнӑ 7 автоцистерна пӗтерсе тӑкнӑ, чугун ҫул ҫинчи 47 вагона ҫунтарса янӑ, боеприпассен 2 складне сирпӗнтерсе янӑ, противник пехотин 7 батальонне сапаласа янӑ, пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Хӗвеланӑҫ фронтӗнчи участоксенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн часть пӗр кун хушшинчи ҫапӑҫусенче халӑх пурӑнакан 2 пункта противникран туртса илнӗ тата 2 оруди, миномет, темиҫе пулемет, боеприпассем нумай тытса илнӗ. Нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 100 ҫынна яхӑн вӗлерсе пӗтернӗ. Фронтӑн тепӗр участокӗнче противник, пирӗн чаҫсен наступленине чарса лартма хӑтланса пӑхса, контратака тунӑ. Нимӗҫсене ҫывӑха пырса ҫитме май парса, пирӗн боецсем вӗсем ҫине тӑвӑл пек вӑйлӑн пеме пуҫланӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче противникӑн салтакӗсем 300 ҫынна яхӑн вилсе юлнӑ, противник каялла чакнӑ. Пӗр кун кунӗпех пынӑ ҫапӑҫу хыҫҫӑн пирӗн часть халӑх пурӑнакан 3 пункта йышӑннӑ тата 6 оруди, 14 пулемет, 3 миномет, 16 автомашина тата ытти трофейӑсем тытса илнӗ.

* * *

Федюнинский юлташӑн чаҫӗсенчен пӗри икӗ кун хушши пынӑ ҫапӑҫусенче тӑшманӑн 7 блиндажне, 5 огневой точкине пӗтерсе тӑкнӑ, противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 200 ҫынна вӗлерсе пӗтернӗ тата нимӗҫсен 291-мӗш пехотнӑй дивизийӗн штабне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Питех те кирлӗ документсем тытса илнӗ. Икӗ оруди, 2 трактор, темиҫе автомашина, 200 мина тата ытти ҫар пурлӑхӗсем туртса илнӗ.

* * *

Балти флочӗн ҫыранри артиллерийӗ нимӗҫсен йывӑр орудисен 5 батарейине пусарса лартнӑ.

* * *

Пирӗн пӗр чаҫри 1-мӗш батальонӑн комиссарӗ Левченко юлташ, халӑх пурӑнакан пунктшӑн 15 боецпа пӗрле кӗрешсе, противника паникӑна ӳкерсе хӑваласа янӑ. Левченко юлташ хӑй 13 нимӗҫе, вӑл шутрах 3 офицера, пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Тула облаҫӗнчи партизан Р. юлташ питех те паха ӗҫ тунӑ. Вӑл нимӗҫсен пысӑк чаҫӗ вырнаҫса тӑнӑ ҫӗре ҫӗрле кӗрсе кайнӑ та тӑшман штабӗнчен пуҫласа малти позицисем патне пыракан телефон линийӗпе пӗрлештерсе тепӗр лини карнӑ. Хӑй карнӑ линие Р. юлташ пирӗн чаҫӑн телефон станцийӗпе ҫыхӑнтарнӑ. Ҫапла вара нимӗҫсен командованийӗ фронтӑн ҫак участокӗнче пурнӑҫа кӗртме палӑртнӑ плана пӗлме май килнӗ. Тӑшман оборонин чи вӑйсӑртарах пункчӗсене палӑртса, пирӗн часть атакӑна кӗрсе кайнӑ, вара ҫав кунах Д. ялне йышӑнса илнӗ. Противник тарнӑ, ялта унӑн хӗҫпӑшалӗсемпе боеприпасӗсем нумай вырта юлнӑ.

* * *

Нимӗҫсен СС «Мертвая голова» ятлӑ дивизийӗн 1-мӗш полкӗнчен тыткӑна лекнӗ обер-ефрейтор Вернер Зальбек хӑй каласа панӑ тӑрӑх, вӑл ноябрь уйӑхӗччен «Мертвая голова» дивизин штабӗ ҫумӗнчи пропагандӑн 2-мӗш взводӗнче шофер пулса ӗҫленӗ, ҫавӑн чухне «фронтран каякан хыпарсене» мӗнле суя майсемпе хатӗрленине курнӑ. Зальбек ҫапла пӗлтернӗ: «Луга патӗнче эпир 3 эрне хушши пӗр вырӑнтах тапӑртатса тӑтӑмӑр, пирӗн корреспондентсем вара малалла хӑвӑрт куҫса пыни ҫинчен ҫыратчӗҫ. Пропаганда взвочӗ суя фактсем шухӑшласа кӑларса элеклӗ хыпарсем туса хатӗрлет. Эпир халӑх пурӑнакан мӗнле те пулин пункта йышӑнса илсен, взвод командирӗ обер-лейтенант Рюлс хушнипе, фотографпа салтаксем вырӑнти халӑха ҫӗмрӗк тата никам та пурӑнман ҫуртсем патне хӑваласа пухатчӗҫ. Кунта вара вӑл ҫынсене салтӑнтаратчӗҫ те вӗсем ҫине ҫӗтӗк-ҫатӑк тумтирсем ҫакса яратчӗҫ, вӗсене фотограф хушнӑ пек тӑма приказ паратчӗҫ. Ҫакӑн пек ӳкерсе илнӗ картинӑсене ҫийӗнчех Германие хаҫатсенче кӑларма яратчӗҫ, вӑл ӳкерчӗксен айне: «Ҫакӑн пек пурӑнаҫҫӗ Российӑра», тесе ҫыратчӗҫ.

* * *

Нимӗҫ ефрейторӗ Иоганн Хауэлр ҫумӗнче унӑн амӑшӗ Штидлернран ҫырнӑ ҫырӑва тупнӑ. Ҫырура сӑмах майӗн ҫапла каланӑ: «...Макс Шурлера чирлӗ пулни пирки ҫартан янӑччӗ, анчах халӗ ӑна каллех повестка панӑ. Ҫара сывӑ та ҫамрӑк ҫынсене илесҫӗ пулсан, эпӗ ӑна ӑнланатӑп. Ҫара стариксене, чӑлахсемпе чирлӗ ҫынсене массӑллӑн хӑваласа пухнине вара эпӗ ниепле те ӑнланма пултараймастӑп».

* * *

Финсен 7-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 9-мӗш полкран тыткӑна лекнӗ салтак Хоуиюнен ҫапла пӗлтернӗ: Хельсинкире тата Финляндин ытти хулисенче Финлянди салтакӗсемпе нимӗҫ салтакӗсем ҫапӑҫасси яланхи япала пулса тӑнӑ. Час-часах нимӗҫсене вӗлернипе пӗтекен ҫавӑн пек тытӑҫусем вӑхӑтӗнче гитлеровецсене хӗнеме хуласенчи халӑх Финлянди салтакӗсене активлӑн пулӑшать.

* * *

Оккупациленӗ Францири чылай хуласенче нимӗҫсен оккупациллӗ влаҫӗсем хыттӑн асӑрхаттарса кӑтарту пичетлесе кӑларнӑ, ҫав кӑтартура пӗтӗм халӑха, военно-полевой судпа хӑратса, пӗтӗм ӑшӑ тумтирсене нимӗҫсене пама хушнӑ. Штурмовиксен отрячӗсем хваттерсене ҫӗмӗре-ҫӗмӗре кӗреҫҫӗ те хӗллехи тумтире, ӑшӑ кӗпе-йӗме, тирсене, одеялӑсене вӑйпах илсе тухса каяҫҫӗ. Урамра иртсе пыракан ҫынсене фашистсем тытса чараҫҫӗ, вӗсен алшишӗсене, ҫӗлӗкӗсене тата ӑшӑ тумтирӗсене хывса илеҫҫӗ. Ботюн хулинче оккупантсем 3 француза персе вӗлернӗ, вӗсем фашистсене хӑйсен ӑшӑ шарфӗсене тата алшишӗсене пама килӗшмен пулнӑ.

* * *

Арменири ӗҫҫынисем ССР Союзӗн оборона фондне 14.290 пин тенкӗ укҫа, 1.320 грамм ылттӑн, 150 килограмм кӗмӗл хывнӑ. Арменири колхозниксем оборона фондне 5.590 центнер аш-какай, 4.260 килограмм ҫӑм тата 41.612 пӑт тӗштырӑ панӑ.

### Январӗн 10-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Январӗн 10-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн войскӑсем противника хирӗҫ пур фронтсенче те ҫапӑҫнӑ.

* * *

Хӗвеланӑҫ фрончӗн участокӗсенчен пӗринче икӗ кун хушши ҫапӑҫса, пирӗн часть нимӗҫсене халӑх пурӑнакан виҫӗ пунктран ҫапса кӑларнӑ тата пӗр танк, 7 оруди, 11 пулемет, 4 миномет, боеприпассем нумай тытса илнӗ.

* * *

Пирӗн боецсем, неприятелӗн позицийӗсене (Кӑнтӑр-Хӗвеланӑҫ фрончӗ) кӗтмен ҫӗртен атакӑласа, нимӗҫсен батальонӗн штабне ҫапса аркатнӑ тата противникӑн 160 салтакне, 8 офицерне вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Ленинград фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн часть, противника хирӗҫ пӗр кун хушши ҫапӑҫса, тӑшманӑн ҫӗрпе йывӑҫран тунӑ 15 огневой точкисемпе блиндажӗсене аркатса тӑкнӑ тата нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 260 ҫынна ытла вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Н. ялӗшӗн пынӑ ҫапӑҫура Моисеев минометчик хӑйӗн минометӗнчен персе, тӑшманӑн танкеткине ҫапса ҫӗмӗрнӗ тата нимӗҫсен 15 салтакне пӗтерсе тӑкнӑ.

Отделени командирӗ сержант Цвельев юлташ П. ялӗнче урамри ҫапӑҫусем пынӑ вӑхӑтра нимӗҫсем вырнаҫса тӑракан ҫуртсенчен пӗрине ҫӗмӗрсе кӗнӗ, хӑйӗн автоматӗнчен персе, вӑл тӑшманӑн 20 салтакне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Харьков партизанӗсен С. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячӗ С. ялӗнче нимӗҫсен полицин комендатури ҫине пырса тапӑнса 25 полицейскине, вӑл шутра полици начальникне те, пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫакӑн пек трофейӑсем тытса илнӗ: икӗ пулемет, икӗ автомат, 150 винтовка, 12.000 патрон, автомашина, 250 литр бензин тата питех те паха документсем.

* * *

Нимӗҫсен 32-мӗш пехотнӑй дивизийӗн 96-мӗш пехотнӑй полкӗнчи 12-мӗш ротӑран тыткӑна лекнӗ ефрейтор Рудольф Бенте ҫапла каласа панӑ: «Вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа пирӗн ротӑна виҫӗ хутчен ҫынсем хушса панӑ. Ротӑн малтанхи составӗнчен пӗр ҫын та тӑрса юлман темелле. Вӗсем е аманнӑ, е вилнӗ. Ротӑра пӗр офицер кӑна — обер-лейтенант Ольцер тӑрса юлнӑ. Ытти офицерсене пурне те вӗлерсе пӗтернӗ. Кашни взводрах 5—6 салтакӑнне урисене тӑм илсе янӑ. Тӑм илсе суранланакансен хисепӗ кунран-кун ӳссе пырать. Салтаксем пурте пытланса кайнӑ. Нумайӗшӗсем юлашки хут ҫулла, юханшывра ҫӑвӑннӑ».

* * *

Ленинград облаҫӗнчи Лядински районри Перешеек ялӗнче нимӗҫ оккупанчӗсем тискер погром туса ирттернӗ. Вӗсем ялти халӑхран мӗнпур тырпула, выльӑх-чӗрлӗхе, чӑх-чӗпе, ҫипуҫ-тумтире тата килти вак-тӗвек япаласене пуҫтарса тухса кайнӑ. Ҫакӑн пек ҫаратса пӗтернӗ хыҫҫӑн нимӗҫсем темиҫе хӗре ирӗксӗрлесе пусмӑрланӑ, унтан пӗтӗм яла вут тӗртсе ҫунтарса янӑ.

* * *

Сталинград облаҫӗнчи ӗҫҫынисем хӑйсен ӗҫ хӑвӑртлӑхне кунран-кун ӳстерсе пыраҫҫӗ. «Баррикада» заводри строгальщик Дрегер сменӑра 7-шер норма тултарса ӗҫлет, строгальщик Долгов тата шлифовальщик Чижов юлташсем 5—6-шар норма параҫҫӗ. Старший мастер Орлов юлташӑн участокӗ январь кунӗсенчи задание 200-шер процент е ытларах та тултарса пырать. Сакко тата Ванцетти ячӗсемпе тӑракан заводри Налинайко юлташӑн бригади куллен 7-шер норма парса ӗҫлеме тытӑннӑ. Ҫав заводри слесарь Данилин пӗр сменӑра 10 норма тултарнӑ. Механически цех январӗн пирвайхи пилӗк кунлӑхӗн планне 197 процент тултарнӑ.

## Юнлӑ фашистсене—вилӗм!

Ҫӗрӗҫ халӑх комиссариатӗнче ӗҫлекенсем Ютҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов юлташ Германи влаҫӗсем хӑйсем тытса илнӗ совет территорийӗсем ҫинче пур ҫӗрте те халӑха ҫаратса юхӑнтарни ҫинчен пӗлтерсе, ирӗклӗхшӗн кӗрешекен государствӑсен представителӗсем патне янӑ нотӑна тимлӗн вуласа тухрӗҫ.

Юнлӑ фашистсен вӑрӑ-хурахла ҫарӗ, пирӗн геройла Хӗрлӗ Ҫар чаҫӗсен иксӗлми вӑйӗ умӗнче хӑйӗн вӑйсӑрлӑхне туйса, вӑхӑтлӑха тытса илнӗ совет территорийӗ ҫинче совет ӗҫхалӑхӗн нумай ҫулӗсем хушшинче тунӑ пурлӑхне ҫаратса юхӑнтарать, ӗҫҫыннисенчен ҫавтери тискеррӗн мӑшкӑллать. Анчах нимӗҫ фашисчӗсене вилӗмрен нимӗн те ҫӑлас ҫук. Паттӑр совет халӑхӗн иксӗлми вӑйӗ сехетрен сехете ӳссе пырать. Миллион ӗҫҫынисем, ӗҫ фронтӗнче ҫӗрӗн-кунӗн геройла ӗҫлесе, юнлӑ фашистсен вилӗм сехетне ҫывхартаҫҫӗ. Пирӗн ҫӗршыва та чуралантарас шутпа сӗмсӗрленсе кӗнӗ нимӗҫ оккупанчӗсем хӑйсем вӑхӑтлӑха тытса илнӗ ҫӗрпе чыхӑнса ҫавӑнтах вилӗм тупӗҫ. Вӗсен тискер кайӑкла юнлӑ ӗҫӗсене халӑх ӗмӗрне те манмӗ, ҫавсемшӗн тӑшмансене каҫармӗ

Пӗтӗм совет халӑхӗпе пӗрле эпир, Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ халӑх комиссариатӗнче ӗҫлекенсем, нимӗҫ фашисчӗсен юнлӑ ӗҫӗсене хирӗҫ ответлесе, вӗсене вилӗм кӳме хамӑрӑн Хӗрлӗ Ҫара пӗтӗм вӑйпа пулӑшма пулатпӑр. 1942 ҫулта тата та вӑйлӑрах тырпул, пахча-ҫимӗҫ туса илессишӗн кунӗн-ҫӗрӗн ӗҫленипе пӗрлех ҫар ӗҫне тимлӗн вӗренетпӗр, тӑван ҫӗршыв оборонин хӑватне ӳстерессишӗн, Хӗрлӗ Ҫарпа Тинӗс-Ҫар Флотне ӗҫлӗн пулӑшассишӗн татах та ытларах тӑрӑшса ӗҫлетпӗр.

Хӗрлӗ Ҫарӑн паттӑр боецӗсем валли эпир 32 мӑшӑр ҫӑмата, 22 ҫӗлӗк, 3 ҫӑм шарф пухса патӑмӑр, вӗсем валлиех 12 килограмм ҫӑм, 24 тир, ҫие тӑхӑнмалли ӑшӑ кӗпесем, нумай носкисемпе алсасем пухрӑмӑр. Боецсем патне 132 килограмм панулми, 14 килограмм арбуз, 62 пачка пирус парне ятӑмӑр.

146 работник, ПВХО ӗҫне вӗренсе, значок нормисене пачӗҫ. 46 работница санитари ӗҫне ӑнӑҫлӑн вӗреннӗ хыҫҫӑн халӗ сандружинӑра активлӑн ӗҫлет. Ҫар призывӗнче тӑма тивӗҫ арҫынсем пурте хула военкомачӗ ҫумӗнче ҫар ӗҫне вӗренеҫҫӗ.

Ҫӗршывӑн оборона фондне пирӗн коллектив 32.220 тенкӗлӗх заем облигацийӗсем хывӗ, воскресниксенче ӗҫлесе илнӗ укҫана йӑлтах оборона фондне пачӗ. Ҫӗршывӑн оборонине тӗреклетнӗ ҫӗре каякан укҫа-тенкӗпе япала лотерейин билечӗсене кашни работник пӗр уйӑх ӗҫукҫин 20 процентчӗ чухлӗ ҫырӑнса илнӗ.

«Комсомол Чувашии» бронепоезда тума кашни ӗҫлекен хутшӑнса 2.600 тенкӗ укҫа тата 3.380 тенкӗлӗх заем облигацийӗсем патӑмӑр.

Пирӗн коллектив халӗ нихӑҫанхинчен ҫирӗп, пӗрлӗхлӗ тата дисциплинӑллӑ. Вӑл партипе правительство хушнипе кирек мӗнле мероприятие те пурнӑҫлама, кирек мӗнле ӗҫе те хӑвӑрт тума пӗр ҫын пек хатӗр тӑрать.

Юнлӑ нимӗҫ фашисчӗсене — вилӗм! Хамӑрӑн пӗтӗм вӑя, пултарулӑха ҫӗнтерӳ тунӑ ҫӗре наратпӑр!

**Л. БЫРЕНКО.**
**Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариатӗнчи парторганизацин секретарӗ.**

## ФРОНТОВОЙ БРИГАДӐСЕМ

КАНАШ. Нумаях пулмасть ВРЗ-ра вагонсем юсакан цехри комсомолецсемпе ҫамрӑксен пухӑвӗ пулса иртрӗ. Унта ватӑ рабочисем, мастерсем пулчӗҫ. Пухура ВЛКСМ обкомӗн секретарӗ П. Михайлов юлташ сӑмах тухса каларӗ. Вӑл мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫар вӑрҫӑ фронтӗнче ҫӗнтерӳсем туни ӗҫҫыннисене татах та лайӑхрах ӗҫлеме хавхалантарни ҫинчен тата Горькири Молотов ячӗпе тӑракан автозаводри комсомолецсем фронтри пек ӗҫлеме пуҫару туни ҫинчен каласа пачӗ. Совет Союзӗнчи нумай предприятисенче фронтовой бригадӑсем тунӑ. Вӗсем кашни заводрах пулмалла, тет Михайлов юлташ.

Трибуна ҫине заводри чи лайӑх производственник Чернухин комсомолец тухрӗ.

— Эпир тылри пысӑк ҫарӑн боецӗсем. Хӗрлӗ Ҫар боецӗсемпе пӗрлех утатпӑр, халь наступление каятпӑр. Эпӗ хамӑн бригадӑпа пӗрле Горькири комсомолецсен чӗнӗвне йышӑнатӑп, тӑван ҫӗршыва, правительствӑна, Сталин юлташа фронтри пек ӗҫлеме сӑмах паратӑп,—терӗ Чернухин, хӑйӗн сӑмахне вӗҫлесе.

Пухура заводри комсомолецсемпе ҫамрӑксене фронт валли татах та ытларах продукци туса кӑларма чӗнсе партбюро секретарӗ Сорокин юлташ сӑмах тухса каларӗ.

Тепӗр кунне комсомолецсемпе ҫамрӑксен пухӑвӗ вагонсем тӑвакан цехра пулса иртрӗ. Ку цехри комсомолецсемпе ҫамрӑксем Чернухинпа Чессов юлташсен бригадисен чӗнӗвне ырларӗҫ, комсомолецсемпе ҫамрӑксенчен 5 фронтовой бригада организациленӗ.

Фронтовой бригадӑсем тӑвас ыйтӑва сӳтсе явас тӗлӗшпе ҫак кунсенче Канаш станцинчи депори комсомолецсемпе ҫамрӑксем, Горькири комсомолецсен пуҫарӑвне ырласа, хӑйсем патӗнче 16 ҫынтан пӗр фронтовой бригада организацилеме йышӑннӑ. Бригадӑн бригадирӗ пулма депори чи лайӑх машиниста, белофинсене хирӗҫ пынӑ ҫапӑҫура пулнӑ комсомолеца Чеботарев юлташа уйӑрнӑ.

## Шкулти оборона ӗҫӗ

СОВЕТСКОЕ. Асламасри туллимар вӑтам шкулта (директорӗ А. Яковлев) ҫар ӗҫне вӗренесси ӑнӑҫлӑн пырать. Ҫарпа физкультура, Осоавиахим ӗҫӗсене йӗркелесе пыма тивӗҫлӗ ҫынсене уйӑрнӑ. Вӗсен оборона ӗҫӗсене туса пымалли ҫирӗп план пур. Кашни кунах мӗнле те пулин заняти пулса иртет.

Вӗренӳ ҫулӗ пуҫланнӑранпа ку шкулти 98 вӗренекен ГСО значокӗн нормисене панӑ, ПВХО значокӗн нормисене 75 ача, БГТО нормисене 8 ача парса значоксем илнӗ. 25 ача БГТО значокӗн пур нормисене те панӑ. Ку ӗҫре учитель-комсомолец С. Малышев тӑрӑшса ӗҫлет. Вӑл пуҫарнипе аслӑ классенче вӗренекенсем кашниех ҫар ӗҫне вӗренме винтовкӑпа граната макечӗсем тунӑ. Вӗренекенсем ҫирӗп те хӑтӑмлӑ боецсем пулма хатӗрленеҫҫӗ.

**Е. ИВАНОВ.**

## Культсбор укҫине тӳлеҫҫӗ

КАНАШ. Вӑтакас-Татмӑшри Чкалов ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем культсбор укҫине тӳлеме пуҫларӗҫ.

Колхозри ватӑ колхозник Н. Данилов культсбор укҫине пуринчен малтан тӳлесе татрӗ.

— Эпир тӳлекен культсбор укҫи гитлерла ҫынҫиенсене хӑвӑртрах ҫапса ҫӗмӗрме пулӑшать,—терӗ Данилов юлташ.

Н. Даниловран пример илсе, Ф. Григорьев, Т. Ильин, И. Иванов юлташсем те алла извещени иличчченех культсбор укҫине пӗтӗмпех тӳлесе татрӗҫ.

**Т. ТУРХАН.**

* * *

ШАХАСАН. Районри колхозниксем 1942 ҫулти укҫа-тенкӗ парӑмӗсене тӳлесе татаҫҫӗ. Ухман ялсоветне кӗрекен «Ямурза» тата «Олешево» колхозсенчи колхозниксем, пурте пӗр шухӑш-кӑмӑллӑ пулса, 1942 ҫулшӑн культсбор укҫине 100 процентчӗпех тӳлесе татрӗҫ. Вӗсем парӑмсене хӑйсем пек вӑхӑтра тӳлесе татма чӗнсе районри мӗнпур колхозниксем патне ҫыру ҫырнӑ.

Ҫавӑн пекех 1942 ҫулти укҫа-тенкӗ парӑмӗсене тӳлес ӗҫ Атнаш ялсоветӗнче те ӑнӑҫлӑн пулса пырать. Киров ячӗпе тӑракан колхозри Г. Волков, А. Гордеев, Е. Степанов, А. Касьянов тата ыттисем те культсбор, самообложени укҫисене тӳлесе татнӑ.

**В. Я.**

# Рузвельтăн конгреса янă посланийĕ

**ВАШИНГТОН**, январĕн 6-мĕш. (ТАСС). Рузвельт конгресра çак послание вуласа панă:

«Хамăрăн нацин лару-тăрăвĕ çинчен пĕлтерес тивĕçлĕхе пурнăçа кĕртес майпа, эпĕ сире тулли кăмăлпа çакна калама пултаратăп: Америка халăхĕн вăй-хăвачĕпе шухăш-кăмăлĕ нихăçан та хальхи пек çирĕп те аслă пулман. Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен вăйĕсем нихăçан та хальхи пек çирĕппĕн пĕтĕçсе тăман тата пирĕн çĕршыв хăйĕн умĕнче тăракан аслă задачăсене татса парас тĕлĕшпе нихăçан та хальхи пек хатĕр пулса тăман. Америка халăхĕ хăйĕн умне тухса тăнă обстановкăра пĕр аслă шухăшкăмăлпа пурăнма тытăнчĕ, çак пысăк хавхалану вăл эпир хамăрăн хăрушсăрлăха татăклăнах пурнăçа кĕртиччĕнех тытăнса тăрĕ.

Шăп пĕр çул каярах эпĕ çак конгреса çапла пĕлтернĕччĕ: «Диктаторсем пире хирĕç вăрçă пуçласа яма хатĕрленсе çитсен, вĕсем эпир вăрçă пуçласси-не кĕтсе тăмĕç. Пирĕн çине хăçан, хăш вырăнта тата мĕнле меслетпе тапăнассине эпир мар, вĕсем хăйсем суйласа илĕç»,—тенĕччĕ. Вĕсем мĕнле вăхăта суйласа илнине халĕ ĕнтĕ эпир пĕлтĕмĕр: çав вăхăт вăл — 1941 çулти декабрĕн 7-мĕшĕнчи мирлĕ вырсарникунхи ир пулчĕ. Пирĕн çине килсе çапма вĕсем мĕнле вырăн суйласа илнине эпир пĕлтĕмĕр: çак вырăн вăл—Америкăн Лăпкă океанри форпосчĕ пулса тăчĕ. Вĕсем мĕнле меслет суйласа илнине эпир пĕлтĕмĕр: çав меслет вăл—Гитлерăн хăйĕн меслечĕ пулчĕ.

Японин ютçĕршывсене çавăрса илмелли планĕсем вĕсем çур ĕмĕртенпе пыраççĕ. Çакă вăл пурăнмалли çĕрсен талккишне сарас тĕлĕшпе туса пыракан ахаль политика пулман, çакă вăл Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи тата Лăпкă океанри утравсем çинчи мĕнпур халăхсене чуралăха кĕртсе ÿкермелли план, çакă вăл Çурçĕр Америкăн, Вăтаçĕр Америкăн тата Кăнтăр Америкăн хĕвеланăçĕнчи çыранĕсем çинче Япони военщини пуçпулса тăрассине тата тинĕс-çар тĕлĕшпе Япони енчен контроль туса тăрассине çирĕплетмелли план пулнă. Çав сĕмсĕр план вăл çакăн пек аталанса пынă: Япония 1894 çулта Китая хирĕç вăрçă пуçланă, кун хыççăн Япония Корейăна оккупациленĕ, 1904 çулта Япония Российăна хирĕç вăрçнă, 1929 çулта Япония Лăпкă океанри утравсене законсăр йĕркепе хăйне пăхăнтарнă. 1931 çулта Япония Манчжурие тытса илнĕ тата 1937 çулта Китая хирĕнсе кĕнĕ.

Ютçĕршывсене тытса илмелли çавăн пек преступлениллĕ политикăна Итали те тытса пынă. Фашистсем хăйсен империалистла планĕсене чи малтан Ливире тата Триполире кăтартса пачĕç: 1935 çулта вĕсем Абиссинне тытса илчĕç. Вĕсен тĕллевĕ—мĕнпур Çурçĕр Африкăра, Египетра, Францин уйрăм пайĕсенче тата мĕнпур Вăтаçĕр тинĕсре пуçпулса тăрасси пулнă.

Анчах та, Гитлерпа унăн нацисчĕсен калама çук пысăк хапсăнăвĕпе танлаштарсан, японецсемпе Итали фашисчĕсен ĕмĕчĕсем чылай ансăртарах пулнă. 1933 çулта влаçа хăйсен аллине иличченех вĕсем ютçĕршывсене тытса илмелли плансене тĕплĕн палăртса хунă пулнă. Çав плансем тĕнчен пĕр-пĕр пайĕнче кăна мар, тĕнчен мĕнпур континенчĕсемпе пĕтĕм океанĕсем çинче нацистсем татăклăнах пуçпулса тăрассине палăртнă. Гитлер «Берлин—Рим—Токио» союзне туса хунă хыççăн ютçĕршывсене тытса илмелли çав плансем пĕр план пулса тăчĕç. Çав пĕрлĕхлĕ план тăрăх тата ютçĕршывсене тытса илме палăртакан кашнин уйрăм планĕсем тăрăх, Япони тÿпине çакăн пек задача тиврĕ: çав задача вăл пирĕн енчен Англипе Российăна тата Китая хĕçпăшал тăратассине чарса лартасси пулать. Эсир пĕлетĕр, пирĕн хĕçпăшал вăл Гитлера пĕтерсе тăкас куна пĕр иккеленмесĕр çывхартакан хĕçпăшал пулса тăрать. Японин Пирл Харборти ĕçĕсен тĕллевĕ, пуринчен ытларах, пире çапса антарасси е хăратса пăрахасси мар, пире хамăрăн промышленноçла çар ресурсĕсене Лăпкă океан çинчи вăрçă ĕçĕсене туса пынă çĕре е тата хамăрăн континента хÿтĕленĕ çĕре ямалла мар тăвасси пулнă. Анчах та çав план пурнăçа кĕреймерĕ. Вĕсем пире çапса антараймĕç, пире хăратса ÿкерме пултараймарĕç, эпир паникăна ÿкмерĕмĕр. Конгресăн çак сессийĕ хăех манăн сăмахсене çирĕплетсе парать, мĕншĕн тесен халĕ пирĕн хушăра пуçпулса тăракан çирĕплĕх тата эпир кĕрешме хатĕр тăни тĕнчене пĕтерсе тăкма каварлашакансене хăйсене вилĕм лăпи умне илсе пырса тăратать. Пирĕн вăй-хăват ахаль тавăру вăй-хăватĕнчен вăйлăрах. Çав вăй-хăват вăл Америка халăхĕ тĕнчене çĕнĕрен асапсемпе инкексем тÿсессинчен хăтарма хатĕр тănине кăтартса парать.

Эпир йывăр положение пырса лекнине пирĕн йышăнмалла. Сăмахран, Уэйк утравне геройла хÿтĕлекенсене эпир пулăшма пултарайманнине йышăнма пирĕншĕн питех те йывăр пулчĕ. Эпир Филиппин утравĕсем çине миллион салтак антарма пултарайманнине тата çавăнта пиншер карапсем ăсатма пултарайманнине палăртма пирĕншĕн питех те йывăр пулчĕ. Анчах та, çакă вăл эпир Уэйк тата Гуам утравĕсем çине çăлтăрлă ялавсем çĕнĕрен çирĕплетсе лартма хатĕр тăнине тата Филиппинсен паттăр халăхне Япони империализмĕччен ирĕке кăларма хатĕр тăнине татах та ытларах вăйлатса çирĕплетет. (**Алă çупаççĕ**). Пирĕн пĕтĕмĕшлĕ тăшмансене хирĕç хăватлă наступлени пуçласа ямалла, çитес вăхăтрах эпир çав наступлени пуçласа ярăпăр. Пĕтĕмĕшлĕ тăшмана хирĕç çĕкленекен нацисен пĕрлĕхлĕ çар вăйĕсем анлăн хăватланса саралса каяс çул çинче тăраççĕ. Юлашки икĕ эрне хушшинче Вашингтонра, Мускавра тата Чунцинра пулса иртнĕ канашлусен задачисем çав тĕлĕшпе тăнă та ĕнтĕ. Тĕнĕл держависене хирĕç пĕрлешнĕ 26 нацин 1942 çулти январĕн 1-мĕшĕнче Вашингтонра алă пусса çирĕплетнĕ декларацийĕн тĕллевĕ те пĕтĕмĕшлĕ вăйсене пĕтĕçтерессиех пулса тăрать.

Çитес уйăхсенчех тен йывăр решенисем йышăнма лекĕ, анчах эпир çав решенисенчен аяккалла пăрăнмастпăр. Пирĕнпе пĕрлешнĕ мĕнпур çĕршывсемпе пĕрле эпир çав решенисене хăюллăн та çирĕппĕн йышăнатпăр. Пирĕн столицăра тата ытти çĕршывсен столицийĕсенче те пирĕнпе пĕрлешнĕ мĕнпур çĕршывсен ĕçĕсене, çар тата экономика енĕпе туса пымалли ĕçсене пĕтĕçтерсе, пĕр-пĕринпе килĕштерсе пымалли плансене тĕплĕн пăхса тухса палăртнă. Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи пĕрлешÿллĕ вăрçă ĕçĕсене туса пыма типçĕр çинчи, тинĕсри тата сывлăшри çар вăйĕсене ертсе пымашкăн эпир пĕрлĕхлĕ командовани туса хутăмăр. Противника çапса çĕмĕрме палăртакан пĕрлĕхлĕ стратеги кашни уйрăм штабăн операци тумалли планĕсем çирĕппĕн пăхăнса пычăр тесе, çар штабĕсем малашне пĕр-пĕринпе хутшăнса, пĕрле канашлусем тата консультацисем туса пырĕç. Эпир пĕр-пĕринчен уйăрălса, кашни наци хăй мĕнле пĕлнĕ, çавăн пек туса мар, тăшмана хирĕç пурте пĕрлешсе çапăçăпăр. Çав 26 наци кĕрешме хатĕр тăнипе кăна мар, вăрçăн пур тапхăрĕсенче те пĕр-пĕринпе таччăн çыхăнса ĕçленипе пĕрлешсе тăраççĕ.

Японецсемпе фашистсем тата нацистсем хăйсен ютçĕршывсене тытса илмелли юнлă çулйĕрне пуçланăранпа малтанхи хут çакăн пек факт умĕнче тăраççĕ: вĕсене хирĕç халĕ ĕнтĕ вĕсенчен пысăкрах вăйсем пĕрлешеççĕ. Агрессорсем хăйсен жертвисене пĕчченшерĕн тапăнса, нимĕнле хирĕç тăнине тĕлпулмасăр пĕтерсе пырас вăхăт ĕмĕрлĕхех иртсе кайрĕ. Эпир, пĕр-пĕринпе пĕрлешнĕ çĕршывсем, хамăр вăйсене çакăн пек вырнаçтарса тухăпăр: хамăрăн пĕтĕмĕшлĕ противника пур енчен те чи пысăк сиен кÿмелле пыра-пыра çапăпăр. Çак вăрçа Берлинри тата Токиори милитаристсем пуçласа ячĕç, анчах ăна тăшмана хирĕç хаяр кÿрайманлăхпа çĕкленнĕ мĕнпур этемлĕхĕн пĕрлешÿллĕ вăйĕсем вĕçлĕç. (**Алă çупаççĕ**).

Гитлер хăйĕн Италири тата Японири тарçисемпе пĕрле цивилизацин материальнăй тата духовнăй центрĕсене пĕтерсе тăкма хапсăннă тата хапсăнаççĕ те. Вĕсем хăйсен шучĕпе Великобританин, Российăн, Китайăн, Голландин вăй-хăвачĕсене çапса аркатнă пулĕччĕç, унтан вара çав çĕршывсен ресурсĕсене Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсене çĕнтерсе илес тĕллеве пурнăçа кĕртме пĕрлештернĕ пулĕччĕç. Пирĕн çĕнтерÿ ирĕклĕх çĕнтерĕвĕ пулнине вĕсем пĕлеççĕ. Пирĕн çĕнтерÿ вăл демократи çĕнтерĕвĕ, çемьепе этем тивĕçлĕхĕн тата ырă йĕркелĕх принципĕсен çĕнтерĕвĕ пулнине вĕсем пĕлеççĕ. Пирĕн çĕнтерÿ вăл религи çĕнтерĕвĕ пулнине вĕсем пĕлеççĕ, вĕсем çав çĕнтерÿпе килĕшме пултараймаççĕ.

Гитлерпа турра тĕнчере пĕрле пурăнмашкăн ытла та тăвăрри эпир пĕлетпĕр. Çакна ăна нацистсем Германин киреметсене ĕненмелли çĕнĕ тĕнне мĕнпур тĕнчере ирĕксĕрлесе сарма палăртакан план та лайăх кăтартса парать. Çав план тăрăх таса библие нацистсем «Мейн» Кампф» кĕнекепе, свастикăпа тата юнлă хĕçпе улăштарма шутлаççĕ.

Пирĕн задача паллă: вăрçă чĕртсе яракансем чуралăхри халăхсене пусарса тăнă çĕрте усă куракан гитлеризма пĕтерсе тăкасси, пусмăрти халăхсене ирĕке кăларасси, халăхсене сăмах ирĕклĕхĕ, тĕн ирĕклĕхĕ парасси, мĕнпур тĕнчери халăхсене чухăнлăхпа хăрушлăхран ирĕклĕ пулмалла тăвасси. Çак задачăсене пурнăçа кĕртмесĕр эпир кĕрешме чарăнмастпăр.

Эпĕ хам мĕнпур Америка халăхĕн ячĕпе сăмах калаланине эпĕ пĕлетĕп. Эпĕ пирĕнпе пĕрле кĕрешекен ытти мĕнпур халăхсен ячĕпе те калатăп пулĕ тесе шутлатăп. Хальхи вăхăтра эпир вăрçăра çĕнтерме кăна мар, вăрçă хыççăн çирĕп мир туса хума та хатĕр тăратпăр. Анчах ку чухнехи вăрçăра пеме тата çапăçма пĕлни кăна мар кирлĕ, çавăнпа пĕрлех çине тăрса пĕтĕм вăйя хурса ĕçлени, производствăна вăйлатни кирлĕ. Çĕнтерÿ тăвас тесен, вăрçă хатĕрĕсем туса кăлармалла тата çав хатĕрсене çапăçу пыракан вуншар районсене çитермелле. Германипе Япония тата Италия, çав шутрах вĕсем чуралантарнă çĕршывсенчи промышленность пĕтĕмпе пĕрле туса кăларнинчен эпир темĕн чухлĕ ытларах боеприпассем туса кăларатпăр, анчах, эпир пирĕнпе пĕрлешнĕ ытти нацисем пекех, çавăнпа кăна çырлахма пултараймастпăр. Боеприпассем тата карапсем туса кăларас тĕлĕшпе Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем чи малта тăма тивĕçлĕ. Пирĕн ку енĕпе тĕнĕл держависем нихăçан та туртăнса ÿссе çитмелле марах малта тăмалла. Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен самолетсем, танксем, орудисемпе карапсем мĕн май килнĕ таранах нумай туса кăлармалла, пирĕн хамăрăн хĕçпăшаллă вăйсем валли кăна мар, çавăн пекех тата пирĕн енче, пирĕн майлă çапăçакан çĕршывсен тинĕс-çар флочĕсемпе авиацийĕ валли те хĕçпăшал туса кăлармалла. Пирĕн хĕçпăшал тĕлĕшпе питех те малта тăмалла, мĕншĕн тесен тăшмансем тытса илнĕ çĕршывсенчи халăхсене, мĕнле те пулин май килсе тухсанах хăйсен Германири тата Японири пусмăрçисене хирĕç, хăйсем хушшинчи «квислингсем» текен паллă та ирсĕр сутăнчăксене хирĕç пăлхава çĕкленме хатĕр тăракан халăхсене пирĕн çывăх вăхăтрах çителĕклĕ таран хĕçпăшал парса пулăшмалла. Çав çĕршывсен патриочĕсем патне эпир хĕçпăшал илсе çитерсенех, вĕсем пенĕ пăшал сассисем пĕтĕм тĕнчене илтĕнсе кайĕç.

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи производствăна, çакă вăл пирĕн миллионшар çынсен пурнăçĕпе ĕçĕсене улшăнусем кÿрет пулсан та, хальхи вăхăтринчен чылай çÿлерех çĕклемелле. Пирĕн хамăрăн производствăри вăйсемпе мĕн май килнĕ таранах усă курмалла. Çакна тума май çук тесе никам та ан калатăр. Пирĕн çавна тумалла, эпир çавна тума сăмах панă.

Халĕ кăна эпĕ тивĕçлĕ министерствăсене тата хамăр правительствăн ытти органĕсене çыру ятăм, çав çырура эпĕ çийĕнчех çакăн пек мероприятисем тума приказ патăм:

1) Самолетсен производствин хăвăртлăхне пирĕн 1942 çулта 60.000 самолет туса кăлармалла пултăр тесе ÿстермелле, çакă вăл эпир 18 уйăх каярах кăçалхи çула валли проектпа палăртнинчен 10.000 самолет ытларах пулать. Çав самолетсем хушшинче 45.000 боевой машина — бомбардировщиксем, пикировка тăвакан бомбардировщиксем тата истребительсем туса кăларма палăртнă. Самолетсен производствине малалла ÿстерсе пырса, пирĕн 1943 çулта 125.000 самолет, вăл шутра 100.000 боевой самолет кăлармалла тăвас пулать.

2) Танксен производствин хăвăртлăхне кăçалхи çул 45.000 танк туса кăлармалла пултăр тесе ÿстермелле тата çак производствăна малалла ÿстерсе пырса, çитес çулта 75.000 танк кăлармалла тăвас пулать.

3) Зенитнăй орудисен производствин хăвăртлăхне кăçалхи çул 20.000 оруди туса кăлармалла пултăр тесе ÿстерес пулать тата çав хăвăртлăха малалла ÿстерсе пырса, çитес çул 35.000 оруди кăлармалла тăвас пулать.

4) Суту-илÿ суднисен производствин хăвăртлăхне, 1941 çулта 1.100,000 тоннăллăх суднăсем туса кăларни вырăнне, кăçалхи çул пĕтĕмпе 8 миллион тоннăллăх суднăсем кăлармалла ÿстерес пулать. Суту-илÿ суднисен производствине эпир çитес çул 10 миллион тоннăллăх суднăсем туса кăлармалла ÿстерĕпĕр. Çак цифрăсем тата вăрçăра кирлĕ нумай тĕрлĕ ытти хĕçпăшалсем туса кăларма палăртнă çавнашкал ытти цифрăсем японецсемпе нацистсене вĕсем Пирл Харбор çине тапăнса мĕн туса хунине ăнланса илме май парĕç. (**Алă çупаççĕ**).

Пирĕн умра халиччен нихăçан та пулман йывăр задачăсем тăраççĕ. Пирĕн хĕçпăшал туса кăларас ĕçре хамăр алăри мĕнпур средствăсемпе мĕн май килнĕ таранах усă курмалла. Пирĕн кашни завода, кашни станока çар хатĕрĕсем туса кăларас енĕпе ĕçлеттермелле. Çакă вăл мĕнпур предприятисене, пысăккисенчен пуçласа пĕчĕккисем патне çитиччен, автомобильсем туса кăларакан хăватлă промышленноçран пуçласа ялти мастерскойсем патне çитиччен, пурне те пырса тивет.

Çар производстви ÿссе пырасси çынсенчен — арçынсемпе хĕрарăмсенчен, коллективлăн вăй тата ăс-хакăл хурса ĕçленинчен килет. Пирĕн рабочисем нумайшар сехет ĕçлеме хатĕр тăраççĕ, вĕсем хăйсен ĕç тухăçлăхне ÿстерме хатĕр тăраççĕ, вĕсем эрнере 7-шер кун талăкĕ-талăкĕпех ĕçлеме хатĕр тăраççĕ. (**Алă çупаççĕ**). Вĕсен хăйсен пурнăçĕ, вĕсен тăшмана хирĕç кĕрешекен ывăлĕсемпе тăванĕсен пурнăçĕсем хăйсен ĕç хăвăртлăхĕпе пахалăхĕнчен килнине рабочисем пĕтĕмĕшпех ăнланаççĕ.

Çар производстви металсем çинче тата ытти нумай тĕрлĕ чĕртавар материалĕсем çинче: хурçă, пăхăр, каучук, алюмини, цинк, тăхлан çинче никĕсленсе тăрать. Вăрçă нушисем валли çавăн пек металсене ытларах та ытларах хисеппе парса тăма лекет. Çав металсемпе граждăнла халăхсем хушшинче усă курассине малашне татах та чакарма, нумай чухне тата хăшпĕр металсемпе ку енĕпе усă курассине пачах та пăрахăçа кăларма лекет.

Вăрçă вăрçма укçа кирлĕ. Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем вăрçă ĕçне укçа-тенкĕ хывма тин кăна пуçланă-ха. Нациллĕ оборона ĕçне эпир хамăрăн национальнăй доходăн 15 процентне çеç парса пынă. Эпĕ бюджет çинчен ырăн яма хатĕрлесе хунă посланире кăтартса панă тăрăх, пирĕн çитес бюджет çулĕнчи çар ĕç программи 56 миллиард долларлăх пулмалла, çакă вăл çитес çул пулма тивĕçлĕ национальнăй доходăн çурринчен ытларах пулать. Çакă ĕнтĕ налогсемпе заемсене, заемсемпе налогсене пĕлтерет. Çакă ĕнтĕ шукăль-капăрлăх япалисене тата кашни кун питех кирлĕ мар ытти япаласене туса кăларассине чакармаллине пĕлтерет. Çакă ĕнтĕ кашни çынăн, кашни çемьен хăйĕн мĕнпур вăй-халне пухма тивнине пĕлтерет. Производствăна çакăн пек май килнĕ таранах аслăлатни çеç эпир тăвас çĕнтерĕве çывхартма пултарать.

Хăвăртлăхсем те пысăк вырăн йышăнса тăрĕç. Çухатнă территорие яланах каялла çĕнтерсе илме пулать, анчах иртсе кайнă вăхăта нихăçан та каялла тавăраймăн. Хăвăртлăхсем çынсен пурнăçне çăлса хăвараççĕ, хăрушлăх умне тухса тăнă çĕршыва çăлса хăвараççĕ, хăвăртлăхсем ирĕклĕхпе цивилизацие çăлса хăвараççĕ, паллах ĕнтĕ, вăрахăн çавăрăнкаласси америка-нецсен пурăнăçĕнче нихăçан та паллă вырăн йышăнса тăман. (**Алă çупаççĕ**).

Эпир вăрçă çине тинкеререх те пикенерех пăхнипе пĕр вăхăтрах, тĕрлĕ суя шухăшсем саралассинчен те пирĕн питĕ сыхланмалла; çав суя шухăшсем е хăйсемех пуçланса кайма пултараççĕ, е вĕсене пирĕн çĕршыва противник илсе килсе сарма пултарать. Пирĕн йăваш чунлăхпа лăпкăлăх кăмăлĕ сăраласран питĕ хытă сыхланмалла. Пирĕн противника хак хумасăр тăма юрамасть: противник вăйлă, чее, хаяр та хĕрхенÿсĕр. Вăл хăйне хирĕç пыраканнисене вĕлерме, пĕтерсе тăкма ирĕк илес тесе, нимĕн умĕнче те чарăнса тăмасть. Противник хăйĕн халăхне, эсир вăрçăра çĕç чăнкипех аталанса çитĕнме пултаратăр, тесе вĕрентсе пиçĕхтернĕ. Çак конфликта вăл нумай çулсем хушши хатĕрленĕ, плансем палăртнă, каварлашусем тунă, хăнăхса пынă, хĕçпăшалланнă, вăрçнă.

Эпир те нумай вăй хутăмăр. Тен, пирĕн ăнăçсăр ĕçсем татах та пулма пултарĕç. Пирĕн йывăр, вăраха пыракан, нумай юн тăктаракан, хакла ларакан вăрçă туса пыма тивнине ăнланса илмелле. Тепĕр енчен, пирĕн хамăрăн хушăмăрта пораженилле шухăш-кăмăла вырăн памалла мар. Ку таринччен çавăн пек шухăш-кăмăлсем гитлерла пропаганда аппарачĕн чи тĕп инструменчĕсенчен пĕри пулса тăнă, унпа усă курни нумай çĕршывсене вилĕм кÿнĕ. Анчах та Америка халăхĕ хушшинче кунашкал меслетсем ăнăçлах пулаймĕç.

Пирĕн хамăрăн хушăмăрта та, çавнашкалах эпир пĕрлештерсе тăракан мĕнпур халăхсем хушшинче те хирĕçÿсем тухма памалла мар. Пирĕн уйрăмах халăхсене тĕрлĕ формăсемпе расăсем çине йĕрĕнчĕклĕн пайлассинчен хытă сыхланмалла. Гитлер татах çынсен уйрăм ушкăнĕсем, хушшинче, пĕр расăпа тепĕр раса хушшинче, пĕр правительствăпа тепĕр правительство хушшинче пĕрне-пĕри шанман, ĕненмен шухăш-кăмăлсене сарма тăрăшать. Вăл суялăхпа, ултавпа тата тĕрлĕ сăмахсем сарнипе халĕ те усă курма тăрăшса пăхĕ. Çав системăпа усă курса вăл Францие Англирен уйăрма пултарчĕ. Пире хирĕç кĕрешнĕ чухне те вăл çавăн пек меслетсемпе усă курма хăтланать. Анчах та вăл пирĕн халăхăн тĕллевĕпе вăй-хăвачĕн çавтери çирĕп пĕрлĕхне тĕл пулĕ, çак пĕрлĕх ĕнтĕ тĕнчен ирĕклĕхĕпе мирлĕ саманан сыхлăхне хирĕç тăракан мĕнпур хура шухăшсене пĕтерсе тăкиччĕнех иксĕлми çирĕп тăрĕ.

Эпир çак вăрçа хамăрăн çĕршыва хÿтĕлес шухăш-кăмăлпа çеç туса пыма пултараймастпăр. Эпир хамăрăн мĕнпур вăйхăватсемпе ресурссене мобилизацилесе çитерсенех, тăшмана хирĕç наступлени тума пуçлатпăр, эпир ăна ăçта хăваласа çитме пултарăпăр, çавăнта пыра-пыра çапăпăр. Пирĕн противника хамăрăн çыраннсенчен аяккарах тытса тăмалла, мĕншĕн тесен эпир çапăçăва унăн территорийĕ çине куçарма шутлатпăр. Америкăн хĕçпăшаллă вăйĕсемпе тĕнчен кирек хăш пайĕнче те, противникăн хĕçпăшаллă вăйĕсене хирĕç çапăçăва кĕрсе кайни усă пама пултаракан пур вырăнсенче те, усă курмалла. Çак условисенче ĕнтĕ пуçламĕш позицисене сыхласа хăварас майпа, пирĕн операцисем, оборонăллă çапăçусем пулаççĕ. Малашне вара, пĕтĕмĕшлĕ противника пĕтĕмпех хупăрласа илсе, юлашкинчен ăна тĕппипех аркатса тăкас шутпа, çав операцисем наступленилле çапăçусем пулаççĕ. Америкăн хĕçпăшаллă вăйĕсем Инçетри Хĕвелтухăçĕн нумай районĕсенче çапăçĕç. Пĕрлештернĕ çĕршывсен пурăнăçĕшĕн питĕ кирлĕ коммуникаци линийĕсене сыхлама пулăшас тесе Америкăн хĕçпăшаллă вăйĕсем пур океансенче те çапăçĕç. Типçĕрти, сывлăшри, тинĕсри вăйсем хальхи тĕнче вăрçинче питĕ паха крепоçсем пулса тăракан Британи утравĕсенчи базăсемпе усă курĕç. Америкăри хĕçпăшаллă вăйсем пирĕн хамăрăн полушарие хÿтĕлеме, çавнашкалах тата пирĕн полушари тулашĕнчи базăсене те, тăшман Америка континенчĕ çине тапăннă чухне усă курма пултараканскерсене, хÿтĕлеме пулăшĕç. Пирĕн Европăри е Азири противниксенчен хăшĕ те пулин пĕри хăйĕн вилĕм кÿрекен самолечĕсен эскадрильисемпе вĕçсе килсе пирĕн хуласем çине бомбăсем пăрахас пулсан, вĕсем çакна пирĕн халăха терроррлас, пирĕн хушăмăрти шухăш-кăмăлсене япăхтарас тесе тăвĕç. Пирĕн халăх вĕсенчен хăрамасть. Ирĕклĕхшĕн пирĕн хакла тÿлеме тивнине эпир пĕлетпĕр, эпир вăл тÿлевшĕн чарăнса тăмастпăр, вăл пирĕншĕн темĕн терпех хакла ларсан та, çав тÿлев кайран хăйĕн хакне пин хут ытларах кăларĕ. Пирĕн противниксем тарăхса çитнипе пире хирĕç темтепĕр тума хăтланса пăхсан та, эпир, Лондонри халăх пекех, çапла калăпăр: эпир çакна тÿссе ирттерме пултаратпăр, тÿссе ирттерме çеç мар, тата ытлашшипех каялла тавăрса парма та пултаратпăр. (**Алă çупаççĕ**).

Противник пире хирĕç вăрçăпа тухса, пирĕнтен кашнине хирĕç вăрçă пуçласа ячĕ. Вара пирĕнтен кашниех хăй умне те, пĕтĕм çĕршыв умне те требовани кăларса тăратрĕ. Америкăн тинĕсри 400 пехотинецĕ Уэйк утравне паттăррăн хÿтĕленĕ чухне противника пысăк çухатусем кÿнĕ. Çав пехотинецсенчен хăшпĕрисем çапăçусенче вилнĕ, теприсем халĕ тыткăнра пурăнаççĕ. Çак аслă çапăçу хыççăн чĕрĕ юлнă çынсем ирĕке тухса хăйсен килĕсене тавăрăнсан, вĕсем хăйсен паттăр ĕçĕ хăйсен тăван çĕршывĕнчи 130 миллион çынна мĕнпур чун-чĕререн кĕрешĕве хавхалантарнине пĕлĕç. Фронтсенче çапăçакан пирĕн çынсем американецсем хальхи вăхăтра та, эпир кашни çулах июлĕн 4-мĕшĕнче уявласа асăнакан геройсем пекех, хÿюллине тата çирĕппине кăтартса парĕç.

Англин премьер-министрĕ Вашингтонра пулнă чухне те калаçусем çакăн пекех пулса пычĕç. Г-н Черчилль те, эпĕ те пĕр-пĕрне ăнланатпăр, хамăрăн сисĕмсемпе хамăрăн тĕллевсене ăнланатпăр. Юлашки икĕ эрне хушшинче эпир г-н Черчилльпе иксĕмĕр хальхи тĕнчери аслă вăрçăн ĕçĕсем çинчен тата çак вăрçăри экономикăллă ыйтусем çинчен питĕ усăллă сÿтсе-яврăмăр. Г-н Черчилль Америкăна килнине пирĕн пĕтĕм халăх саламларĕ. Вăл пире аслăн чĕнсе калани пире пурсăмăра та тарăннăн хумхантарса хавхалантарчĕ. Эпир ăна хăйĕн тăван çĕршывне лайăх тавăрăнмашкăн ырă сунатпăр. Пирĕн хушăмăрта вăл яланах кĕтнĕ хакла хăна.

Эпир противника хирĕç нумайшар хăрушла уйăхсем хушши пĕр пĕччен çапăçса противник умĕнче паттăррăн, çирĕп те ăста тытăнса тăнă Англи халăхĕпе пĕр енче, пĕр майлă çапăçатпăр. Эпир вырăс халăхĕпе пĕр енче, пĕр майлă çапăçатпăр. Вырăс халăхĕн нацистла йыткĕтĕвĕсем Российăна пырса кĕрсе, Мускав хапхи патнех çĕмĕрсе пынине тÿссе ирттерме тиврĕ. Вырăс халăхĕ этемле мар вăй-хăватпа тата паттăрлăхпа тăрса кĕрешсе противника каялла чакарма пуçларĕ. (**Алă çупаççĕ**). Эпир паттăр Китай халăхĕпе пĕр енче, пĕр майлă çапăçатпăр. Çав халăх бомбăсем айĕнче, выçлăх умĕнче 4 çул çурă хушши тытăнса тăчĕ, тăшман хăйĕнчен темиçе хут вăйлăрах хĕçпăшалланнă пулин те, Япони агрессорне темиçе хутчен те çапа-çапа аркатрĕ. (**Алă çупаççĕ**). Эпир никама пăхăнман голландецсемпе пĕр енче, пĕр майлă çапăçатпăр. (**Алă çупаççĕ**). Эпир хăйсен çĕршывĕсенчен ютçĕршывсене хăваласа кăларса янă мĕнпур правительствăсемпе, Гитлер хăйĕн çарĕпе, гестапопа усă курса та пăхăнтарма пултарайманскерсемпе, пĕр енче, пĕр майлă çапăçатпăр.

Анчах та эпир, пĕрлешнĕ халăхсем, çак жертвăсене иртнĕ тĕнче вăрçи хыççăнхи пек мирлĕ тапхăра тавăрас тесе тăрăшатпăр. Хальхи вăхăтра эпир сыхăлăхшăн, прогресшăн тата миршĕн хамăр валли çеç мар, тата мĕнпур этемлĕх валли те, пĕр ăру валли çеç мар, тата хамăр хыççăнхи ытти ăрусемшĕн те кĕрешетпĕр. Эпир тĕнчене кивĕ усалтан тата кивĕ чирчĕртен тасатас тесе кĕрешетпĕр. Пирĕн противниксене тискер кайăкла сĕмсĕрлĕх тата мĕнпур этемлĕхе тĕксĕмĕн курайманни ертсе пырать. Пире хăйĕн тымарĕсемпе питĕ авала, «Бытие» кĕнекин пĕрремĕш сыпăкĕ патнелле каякан ĕненÿ хавхалантарса пырать. «Бытие» кĕнекен пĕрремĕш сыпăкĕнче çапла каланă: «Турă этеме хăй сăнсăпатлă, хăй евĕрлĕ тунă», тенĕ. Эпир турă парса хăварнă çак тĕп мула тĕрĕс-тĕкĕл сыхласа хăварассишĕн тăрăшатпăр. Çавнашкалах эпир, турă умĕнче пур çынсем те пĕртан текен тĕрĕс сăмаха хÿтĕлессишĕн, пирĕн аттесем кĕрешнĕ пекех, кĕрешетпĕр. Тепĕр енче çапăçаканнисем пурте çак чăн сăмаха пĕтерсе тăкма тăрăшаççĕ, тĕнчене хăйсем кăмăлланă пек — тирани, тискерлĕх, чуралăх тĕнчи тума тăрăшаççĕ.

Пирĕн пурнăçа çавăрса илнĕ кĕрешÿ çакăн пек ĕнтĕ. Çак конфликта нимĕнле компромисс та вĕçлеме пултараймасть. Усалпа Ырă хушшинче нихăçан та ăнăçлă компромисс пулман, пулас та çук. Тăшмана пуçĕпех çĕнтерни çеç миршĕн кĕрешекенсене çынсем хушшинчи мирлĕ саманана, ырă кăмăллăха, ирĕклĕхпе ĕненÿ тивĕçлĕхне парнелеме пултарать.» (**Алă çупаççĕ**).

(**Радио тăрăх йышăннă**).

## Совет профсоюзĕсен делегацийĕ Англи завочĕсенче пулнă

ЛОНДОН, январĕн 9-мĕш. (ТАСС). Совет профсоюзĕсен делегацийĕн членĕсем Англири чылай çар завочĕсене кайса курнă. Англи хаçачĕсен корреспонденчĕсем, делегаци членĕсемпе пĕрле çÿренĕскерсем, Англи завочĕсене совет çыннисем пырса кайнă хыççăн рабочисем хушшинче пысăк хавхалану пулнине палăртаççĕ.

«Йоркшир пост» хаçатăн промышленность енĕпе ĕçлекен корреспонденчĕ совет профсоюзĕсен делегацийĕн членĕсемпе пĕрле январĕн 3-мĕшĕнчен пуçласах çÿренĕ. Çав корреспондент çапла çырать: «Совет çыннисене курсан мĕнпур рабочисем çавтери хавхаланни вĕсем кунта килни ахаль пулманнине кăтартса парать. Англи рабочийĕсем пурте пĕр шухăш-кăмăллă пулса фронта кирлĕ материалсем туса кăларас ĕçе вăйлатма ыйтаççĕ».

## Советăн тыткăна лекнĕ çар çыннисене нимĕçсем тискеррĕн асаплантарни

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 9-мĕш. (ТАСС). Оверсис ньюс агентствин Стокгольмри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Германи çарĕнче службăра тăнă Швеци врачĕ çапла каласа панă: вырăссен тыткăна лекнĕ çар çыннисене нацистсем сивĕпе тата выçлăхпа асаплантарса вĕлереççĕ. Рига тата ытти хуласем патĕнче вырăссен тыткăна лекнĕ çар çыннисене курма пулать, вĕсенчен мĕнпур ăшă тумтирсене туртса илнĕ, нацистсем вĕсене сивĕрен хÿтĕленме нимĕн те памаççĕ. Тыткăна лекнĕ çынсене çавăн пек этемле мар асаплантарнине хирĕç протестлесе, çав врач хăй Швеципе каялла тавăрăннă, тесе каласа панă.

Юлашкинчен врач çапла кăтартса панă: Германин хирти госпитальĕсем хăрушла япăхса кайнă, çав госпитальсенче медикаментсемпе врачсем пачах та çитмеççĕ.

## Вл. Сикорский генерал Лондона тавăрăннă

ЛОНДОН, январĕн 8-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Польшăн премьер министрĕ Вл. Сикорский генерал, Совет Союзне тата Çывăхри Хĕвелтухăçне кайса çÿренĕ хыççăн, Лондона тавăрăннă.

## Выльăхсем çăмăлланмалли витесем

Сĕнтĕр районĕнчи малта пыракан колхозсем выльăхсем валли вĕсем çăмăлланас умĕн хупмалли ăшă витесем тăваççĕ. Çавăн пек витесем халĕ хăмламалли кĕсресем валли 37 колхозра, ĕнесем пăруламалли витесем—64 колхозра, сыснасем çăвăрламалли витесем—23 колхозра, сурăхсем пăранламалли витесем—35 колхозра тунă. Çав витесенче çăмăлланмалли выльăхсене пурĕ 805 пуç хупмалăх вырăн çит[illegible]

## Çĕнĕ кĕнекесем

Чăвашсен Государство Издательствин ача-пăча литературин секторĕ шкул çулне çитмен тата кĕçĕн султи ачасем валли çак кĕнекесене кăларчĕ:

**Санюк Юрри-сăввисем. Чăвашгосиздат, 1941 ç., 32 стр., хакĕ 3 т. 50 пус.** Кĕнекере пурĕ 25 юрă-сăвă. Вăл сăвăсене Н. Васянкапа Н. Андреев юлташсем пухса тÿрлетнĕ. Кашни юрри сăввинех, вĕсен содержанийĕсем тăрăх, нумай ÿкерчĕксем кĕртсе илемлетнĕ. Укерчĕксене пурне те тăватă тĕслĕ краскăпа литографире пичетленĕ. Кĕнекене лайăх хутпа пичетлесе кăларнă. Укерчĕксене чăваш художникĕ Г. Харлампьев туса хатĕрленĕ.

**М. Зощенко. Ленин çинчен. Чăвашгосиздат, 1941 ç. 64 стр., хакĕ 2 тенкĕ.** Асăннă кĕнекере В. И. Ленин çинчен ачасем валли çырнă калавсене пичетлесе кăларнă. Кĕнекере пурĕ 12 калав. Çак калавсем урлă ачасем Ленинăн ача чухнехи тата революцичченхи пурнăçĕпе паллашаççĕ. Кĕнекене нумай ÿкерчĕксем кĕртнĕ. Калавсене шултра шрифтпа пичетлесе кăларнă.

**А. С. Пушкин. Кирджали. Тиражĕ 2500 экз., 16 стр., хакĕ 50 пус.**

Пĕчĕк повеçре А. С. Пушкин булгар йăхĕнчен тухнă Кирджали ятлă йĕкĕт тăшмансемпе паттăррăн çапăçни çинчен каласа панă. Çак повеçре автор «Белкин повеçĕсем» ятлă серине кĕртнĕ пулнă. Чăвашла вăл малтанхи хут пичетленсе тухрĕ.

## Тÿрлетни

«Чăваш Коммуни» хаçатăн январĕн 9-мĕшĕнчи номерĕнче Молотов юлташăн нотинчи, 2-мĕш страницăри, 2-мĕш колонкăри çÿлтен 38—32-мĕш йĕркесене çапла вуламалла:

«Нимĕç фашисчĕсем, «аслă раса» тенĕ сăмахсемпе витĕнсе, хăйсен халăхне çеç мар пусмăрласа пурăнасшăн, ытти халăхсене те чуралăха кĕртсе ÿкересшĕн».

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ**.

**РЕДАКЦИ АДРЕСĔ**: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. **ТЕЛЕФОНСЕМ**: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналăн — 6—23. «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 318 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 260. Ф. 6. 58 84 п. л.